Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Филиппова Лидия (Михайлова Лидия Ивановна)**

**Книга: Ылханлă хура çĕмĕрт**

**Рассказ: Кам ачи эс, Христина?**

Христя... Кĕскен çапла чĕнетчĕç ăна. Пĕчĕк чух çара уран сивве-пылчăка пăхмасăр урамра арçын ачасенчен юлмасăр чупатчĕ, сасси ян та ян янăраса tăратчĕ. Ӳсерехпе кăна амăшĕ хĕрĕшĕн лăпланса пычĕ: текех арçури пек сиккелесе çӳремĕ, хăйне арçын ачасенчен ютшăнарах тыткалать. Вун пĕрмĕш класран вĕренсе тухас умĕн вара, тĕлĕнмелле те, пачах улшăнчĕ вун çичче пуснă хĕр. «Пăх-ха, пăх, çав Христя мĕнлерех танлă, тӳп-тӳрĕ утать, такăнса ӳкесрен хăрамасть те-ши вара...» − пăшăлтатса юлатчĕç юмах çапма, тĕрĕсрех, çынна кăшлама юратакансем.

Амăшне вара каçсерен усă чӳречерен пӳрте кĕрекен хĕрĕн кăлтăр-кăлтăр кулли канăç пами пулчĕ. Çапла çав, Христьăн усă та янăравлă кăлтăртатăвне никампа та арпаштармĕ амăшĕ. «Мĕн çавăн пек хытă кулатăн? Кам култарать унта сире?» − çапла пĕрре мар ыйтнăччĕ хĕрĕнчен, лешĕ хавассăн çиççе илетчĕ кăна.

Эх-х-х, амăш чĕри... Ыратать çав, ыратать. Хĕрĕн кун-çулĕ те пулин тумхахсăр пултăрччĕ тет. Хăйĕн хĕр пурнăçне аса илет те, пусĕ çаврăнса кайнă пек пулать.

Шкул пĕтернĕ-пĕтермен ашшĕпе амăшĕ хирĕç пулнине пăхмасăр кӳршĕллĕ тутар ялĕнчи Ильдара качча тухрĕ. Пуян пурăнатчĕ упăшкин çемйи. Ашшĕ − совхоз председателĕ, амăшĕ − килĕнче. Ольăна та вĕрентесшĕн пулмарĕ Ильдар: «Хĕрарăмăн таçта аслă шкулта мар, çемьере вĕренмелле − ĕç тума, ача-пăча ӳстерме. Аннерен тĕслĕх ил. Укçа тенине киле арçыннăн илсе килмелле...».

Нимех те калаймарĕ хирĕç çамрăк арăм. Тăван ашшĕ-амăшĕнчен пулăшу ыйтас − аван мар, «houарăмăр, асăрхаттартăмăр» теççĕ кăна ĕнтĕ. Тĕрĕссипе, Ильдара килĕштерменни те мар кунта. Чăваш хĕрĕ тутар ывăлне качча тухассине тӳрех хирĕç пулчĕç вĕсем. «Асту, тутарсем арăмĕсене нимĕн вырăнне хумаççĕ теççĕ, ытларах хуçалăх ĕçĕпе, выльăх-чĕрлĕхпе аппаланмалла пулать акă ăна качча тухсан», − тенисене пуçа çухатасла юратса пăрахнă хĕр упраç шута илесшĕн пулмарĕ. Тĕрĕслĕхĕ вара ашшĕ-амăш сăмахĕнче сахал мар пулчĕ.

«Юрĕ, вĕренме ямарĕç, эппин, тăватă-пилĕк ача çуратса паратăп акă сире», − такама хăра-тасшăн пулнăн шухăшларĕ Оля хăй ăшĕнче. Мĕн тетĕр? Иккĕшĕ те çамрăк, вăйпитти, юн вĕресе тăрать − виçĕ çулран та çие юлмарĕ çамрăк хĕрарăмăн. Малтанлăха лăплантарчĕ-ха Ильдар хуйха ӳкнĕ мăшăрне, амăшĕ: «Кама валли туса лартрăмăр ку капмар çурта, халиччен те ача-пăча сасси илтейместпĕр, эсĕ пирĕн пĕртен-пĕр ывăл, кам йăх тымара малалла тăсĕ?» − тесе мăкăртатнине те илтмĕш пулатчĕ. Çитменнине, Ольăна хĕрле илнине те шутран кăлараймăн.

Çапла тепĕр çул иртрĕ, икĕ çул. Çаплипех ача-пăча сасси илтĕнмерĕ Зайнуллинсен керменĕнче. Шăрпăк пекех тăрса юлчĕ ку киле çырла пек кĕнĕ хĕр упраç. Хунямăшне юрас тесех тутарла та шăкăлтаттарса калаçма вĕренчĕ апăрша, хуçалăхри ĕçсене те чупса çӳресе пурнăçларĕ, мăшăрĕн урисене çума та хатĕрччĕ. Тĕлĕнмелле те, хуняшшĕ кăна лăплантаратчĕ Ольăна, арçын пулин те: «Иксĕр те сывă, пулĕç-ха ачасем, сакăр çултан çуралатех теççĕ вĕтха», − тетчĕ. Ильдар пуçласа ун çине алă çĕкленине халиччен те манса каяймасть Оля.

Çапла пĕррехинче ĕç хыççăн ӳсĕр таврăнчĕ мăшăрĕ. Пӳртре амăшĕ пуррипе харсăрланса-ши, Ольăна, мăшăрне хывăнма пулăшас тесе хирĕç пынăскере, питĕнчен çатлаттарса çупса ячĕ те хăй патĕнчен тĕксе ячĕ. Куна кĕтменскер, Оля урайне персе анчĕ. «Манран юлташсем те кулаççĕ, ача тума пулăшмалла мар-и сана тесе мăшкăллаççĕ!» − хаяррăн кăшкăрчĕ Ильдар. Унтан чăтаймасăр, хăй çине тĕлĕнсе пăхакан арăмĕ нимĕн чĕнменнине кура, сӳсленсе макăрса ячĕ.

Чăтрĕ, чылаях чăтрĕ-ха Оля. Хуняшшĕ инфаркта пула сасартăк вилсе кайсан вара хăшпĕр япаласене пуçтарса Шупашкара тухса кайрĕ: «Ик ура та пĕр пуç, кун пеккине чăтнине хулара та çухалмăп», − тесе шухăшларĕ хăй. (Эх, мăнтарăн, шăпах çак вăхăтра хăй

варĕнче çĕнĕ чун йăва çавăрасси пусĕнче те пулмарĕ унăн.) Ача çук, унчченхи çемйинчен нимĕн те шыраса илесшĕн мар тесе загсра упăшкисĕрех уйăрчĕç тата.

Çапла ирĕклĕ кайăк пулса юлчĕ сакăр çул ытла мăшăрлă пурăннă хĕрарăм, ЖЭУра вахтера ĕçе вырнаçрĕ, хăйне валли пурăнмалли кĕтес те майлаштарчĕ. «Çук, Ильдар, авлан, тутар хĕрне ил, манпа телейлĕ пулас çук эсĕ. Ача кирлех, ăнланатăп аннӳне те. Каçарăр мана...» − çапла каларĕ вăл хăйне виçĕ-тăватă хутчен те каялла илсе кайма килнĕ Ильдара.

Турăçăм! Пĕлесчĕ сирĕн Ольăпа тепĕр тăватă уйăхран мĕн пулнине! Сакăр çул тем пек чăтăмсăррăн кĕтсе те аллине пепке тытса курайманскер, хăйĕнче çĕнĕ чун аталанма тытăннине пачах та асăрхамарĕ малтанах Оля. Арçынпа пурăнманран çапла пулмалла та тен тесе шухăшларĕ кăна. Хытканскер çавракалана пуçласан тата варĕ ыратнă-пăтраннă пек пулсан кăна çул тытрĕ гинеколог патне. Тухтăр: «Халиччен ăçта çӳрен, сан тахçанах учетра тăмалла, çирĕм ултă çул тултаратăп тен, ватă хĕр шутланатăн хăв, çуратма йывăр пулать сана...» − тесе ятлама пуçласан та ĕненсех пĕтермерĕ-ха, хытрĕ те ларчĕ пукан çинче.

Çук, Ильдар патне мар, хăйне кун çути кăтартнă ашшĕ-амăш патне çул тытрĕ Оля, инкек пирки каласа пачĕ. «Мĕнле инкек? Телей ку! Турă хăйне йăлăнса тилмĕрнине илтрĕ-илтрех...» − куççулĕ, савăнăç куççулĕ, шăпăртатса юхрĕ амăшĕн куçĕсенчен. «Ниçта та каймастăн, çынсем кирек мĕн калаçчăр, аннӳ тĕрĕс калать», − касса татрĕ ашшĕ те.

Тепĕр пилĕк уйăхран вара амăшĕ тин çуралнă пепке çине пăхса çапла каларĕ: «Турă пехилне пула кун çути курчĕ ку хĕр ача. Христина ят парар ăна».

Çапла... Пĕлтермерĕç ашшĕне пĕчĕк хĕр пĕрчи пирки. Хамăрах пăхса çитĕнтерĕпĕр терĕç. Ытлашши, тен, ачашларĕç те пулĕ − ахальтен мар арçын ача пекех шухă ӳсрĕ Христя (е, тен, тутар юнĕ те хăйĕнне турĕ). Халĕ акă шкултан вĕренсе тухать Турă пилĕпе килнĕскер.

«Анне, ăçта вĕренме каймалла-ши? Юлташсем экономист та юрист пуласшăн. Ман вара ялтах пурăнас, кукамипе кукаçине пăхас килет...» − тет тата те шӳтлесе, те чăнласа хушăран Христя. Ăнсăртран тенĕ пек агроном пул эппин тенине чăна хучĕ те тăрăшсах ял хуçалăх академийĕ çинчен ĕмĕтленме пуçларĕ, мур илесшĕ. «Анне, шкул директорĕ вĕренме кĕме тĕллевлĕ направлени илсен лайăхрах, совхоз урлă та майлаштарма пулать терĕ, − пĕлтерчĕ пĕррехинче Христя алăкран кĕнĕ-кĕмен. − Ильдар Рафисович çамрăксене ку енĕпе питĕ пулăшать тет. Кайса килер-и ун патне иксĕмĕр?..».

Шартах сикрĕ Оля. «Мĕн тумалла? Тĕл пултармалла мар Христьăна ашшĕпе. Суясси пулмĕ. Тек мăшăр тупаймарăм ун хыççăн. Камăн ачи ку тейĕ. Урăх арçынран тейĕп-ха та, ашшĕ сăнлах тата Христя...». Çапла çав, Христьăна халиччен те ашшĕ çинчен тĕрĕссине каласа паман амăшĕ, юрататтăмăр пĕр-пĕрне, анчах вăл тутар йĕкĕчĕ пулнипе пĕрлешеймерĕмĕр тенипех çырлахнăччĕ. Тĕрĕссипе, Христя та ку таранччен ашшĕ пирки питех интересленмен, кукашшĕпе кукамăшĕ те лешĕн пирки пуçĕпех маннă пек пулнă, Христьăна хăйсен хушаматне панă, ашшĕ ячĕ те − Петровна − кукашшĕн. Суя − çур пурнăç теççĕ те, унсăр та май çук. Çитменнине, Ильдар тепĕр хут авланнине, амăшне килĕшекен тутар хĕрне илнине, вĕсен икĕ ывăл çитĕннине те пĕлет Оля. Мĕнех улăштарĕ Ильдар хăйĕн хĕр ӳснине пĕлни? Ĕненĕ-и тата?

Çавăнпа дирекци çуртне пĕчченех кайса килме шут тытрĕ.

Совхоз директорĕ вырăнта çукчĕ те, урамра кĕтме шутларĕ ăна Оля. Çапла, ашшĕ вилнĕ хыççăн Ильдара лартрĕç колхоз председательне. Кайран таврари ултă яла пĕр хуçалăха пĕрлештерчĕç, совхоз туса хучĕç. Шупашкарта строитель специальноçне алла илнĕскер начар мар ертӳçĕ шутланать пулас, хуçалăх малтисен ретĕнче пырать. Ольăсен ялĕ те, унччен тупăшсăррисен шутĕнчискер, совхоза кĕнĕренпе «малашлăхсăррисен» шутĕнчен тинех тухрĕ. Рабочисем те кăмăллă − тырă та, утă та, ĕç укçи те параççĕ вĕсене. Оля вара çав-çавах фельдшер пунктĕнче урай çуса-тасатса пурăнать. Шел, вĕренесси пулмарĕ апăршукăн, пĕтĕм чун хавалне хĕрне пачĕ, хăй пирки шухăшламарĕ. Чĕрери ыратăвне çынна кăтартас темерĕ. Ильдар тепĕр хут авланнине пĕлсен ухмаха тухнăн хӳхлесе макăрчĕ те урăх куççуль кăлармарĕ. Пĕтĕмпех хăйĕнчен килнине ăнланчĕ пулин те Ильдар пирки манма тăрăшрĕ.

− Оля?!

Асаилӳ авăрне путнăскер хăйне чĕннине илтнипе шартах сикрĕ. Ильдар... Иккĕшĕ те, хĕрĕх урлă каçнăскерсем, пĕр-пĕрне куçĕсенчен тем шыранăн, тем кĕтнĕн тинкерчĕç. Иртнине аса илсе тем каласшăн пулчĕç те çав куççем, хăймасăр айккинелле тарчĕç. Çапла, манăçман çав ырату, пирчемен юрату суранĕ. Ильдар вара улшăннă. Унчченхи хыткан йĕкĕт мар вăл тек. Кĕрнекленнĕ, тулнă... Хĕрĕх пилĕк çулта кăна пулин те пуçĕ кукшаланма

тытӑннӑ. Умра − пачах урӑх арҫын. Куҫӗсем кӑна...

Оля хӑй патне мӗнле сӑлтавпа килнине пӗлсен Ильдар тӗлӗнсе ӳкрӗ тени кӑна ҫителӗксӗр пулнӑ пулӗччӗ. «Хӗр? Санӑн? Усрава илтӗн-и?» − пӑт та пат тунӑн тухрӗҫ унӑн чӗрене ҫӗҫӗпе чикнӗн туйӑнакан сӑмахӗсем. Паспорт ҫинчи Христя сӑн ӳкерчӗкӗ ҫине вӑрахчен тимлесе тинкерчӗ:

− Камӑн хӗрӗ вӑл?

− Манӑн...

− Ашшӗ кам?

Паллах, улталама, темӗн те пӗр шухӑшласа кӑларма та пултаратчӗ Оля.

− Пӗлместӗп, − терӗ кӑна вӑл шӑппӑн Ильдара ыйтуллӑ куҫӗнчен пӑхма хӑяймасӑр.

Килне таврӑнсан та лӑпланаймарӗ-ха Оля. Шуйханчӗ-пӑтранчӗ кӑна унӑн чунӗ. «Мӗншӗн итлерӗмши Христьӑна, мӗншӗн кайрӑм-ши дирекцие», − тесе пӑшӑрханчӗ, хӑйне хӑй ятларӗ.

Ҫапла шуйхансах шӑмат кун иртрӗ, вырсарни кун. Тунти кун вара, ӗҫрен таврӑнсан, Христина сӑмахӗсем ӑна пушшех те пӑлхантарса ячӗҫ.

− Шкула, пӗлетӗн-и, анне, паян совхоз директорӗ пычӗ. Пире, ҫамрӑксене, ял хуҫалӑхӗнче юлма е малалла та ҫак енӗпе вӗренме кайма сӗнчӗ. Христина Маштановӑран тӗслӗх илӗр, лайӑх вӗренет, агроном пуласшӑн, ялтах пурӑнасшӑн, совхозра ун пек специалистсене яланах тараватэпир терӗ. Пӗтӗм класс умӗнче мана алӑ тытсах тав турӗ. Ой, мӗнле кӑмӑллӑ ҫын иккен вӑл Ильдар Рафисович, − чарӑна пӗлми калаҫрӗ вӑл амӑш сӑнӗ шуралса кайнине асӑрхамасӑр. − Мана, илтетӗн-и, анне, совхоз дирекцине пырса ҫӳреме каларӗ, направленине те паратпӑрах терӗ. Аҫу-аннӳ ӑҫта ӗҫлет, кам сана кун пек хитре ят панӑ тесе ыйтса пӗлчӗ. Атте камне пӗлместӗп те, ҫаплах каларӑм. Анне, чӑннипех те, кам манӑн атте? Кам хӗрӗ эпӗ?!

Христинӑн сассине илтмерӗ те пулас ҫак самантра Оля. Шухӑшӗсемпе каллех вун ҫичӗ ҫул каяллахи вӑхӑтра вӑл. Унта вара вӗсем иккӗн кӑна − тутар йӗкӗчӗ Ильдар тата таса та асамлӑ юрату тыткӑнне ҫакланнӑ чӑваш пики Оля...

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.